26-мӗш çул тухать. Хакӗ 20 пус.

1943 МАЙ 12 ЮНКУН 99(6336) №

Чăваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАÇАЧӖ

Машинăпа тракторсен паркне пысăк тухăçлăхпа ӗçлеттернӗшӗн, ЧАССР Наркомземӗпе Наркомземӗн Политсекторӗ тăратнă тăрăх, ялхуçалăхӗнче малта пыракансен республикăри **ХИСЕП ХАМИ** çине çаксене кӗртнӗ:

11. **Тăвай МТС-ӗнчи 4-мӗш тракторнăй бригада** (бригадирӗ И. П. Петров). Бригада, çемçе суха çине куçарса шутласан, 450 гектар ӗçленӗ тата 980 килограмм горючи перекетлесе хăварнă, планпа 392 гектар сухаламалла пулнă.

12. **Александр Васильевич Баданов** — Тăвай МТС-ӗнчи 4-мӗш бригадăн трактористӗ. Вăл ЧТЗ тракторпа ӗçлесе, планпа палăртнă 265 гектар вырăнне 322 гектар сухаланă.

13. **Дарья Ермолаевна Ермолаева** — Тăвай МТС-ӗнчи 4-мӗш бригадăн трактористки. Вăл урапаллă СХТЗ тракторпа ӗçлесе, планпа палăртнă 78 гектар вырăнне 101 гектар сухаланă тата 35 килограмм перекетлесе хăварнă.

14. **Шăхасан МТС-ӗ** (директорӗ **Н. К. Константинов**, политотдел начальникӗ **Ф. С. Ижутов**, старши механикӗ **И. Н. Северов**). МТС майăн 10-мӗшӗ тӗлне çураки вăхăтӗнче тракторпа ӗçлемелли плана 106 процент тултарнă.

15. **Ишлей МТС-ӗнчи 9-мӗш тракторнăй бригада** (бригадирӗ **Т. Е. Ефимов**). Бригада, çемçе суха çине куçарса шутласан, планпа палăртнă 290 гектар вырăнне 296 гектар ӗçленӗ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Тинӗспе юханшыв транспорчӗ çинче çарти пек йӗрке тăвасси çинчен

«Пур чугунçулсем çинче те çарти пек йӗрке тăвасси çинчен» СССР Верховный Совет Президиумӗ 1943 çулхи апрелӗн 15-мӗшӗнче кăларнă Указа Наркомморфлот, Наркомречфлот тата СССР Совнаркомӗ çумӗнчи Çурçӗрти Тинӗс Çулӗн Главнăй Управленийӗ çине сарас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1943 çулхи майăн 9-мӗшӗ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Улатăрти паровозсем юсакан заводри уйрăмах палăрнă рабочисене, инженерла-техникла тата ертсе пыракан работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотипе наградăласси çинчен

Производство заданийӗсене ăнăçлăн пурнăçа кӗртнӗшӗн Улатăрти паровозсем юсакан заводри уйрăмах палăрнă çак рабочисене, инженерла-техникла тата ертсе пыракан работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотине парса наградăлас:

1. Александра Михайловна **Акимовăна** — котельнăй цехри работницăна.
2. Дмитрий Семенович **Балятинскине**—электростанци машинистне.
3. Василий Иванович **Волкова**—колеснăй цехри токаре.
4. Виктор Васильевич **Горковеца** — котельнăй цех начальникне.
5. Ольга Васильевна **Горковеца** — тимӗрç цехӗнчи пăспа ӗçлекен мăлатукăн машинистне.
6. Константин Трофимович **Горшенина**—ремонтно-механически цехăн слесарьне.
7. Дмитрий Тимофеевич **Глазова** — цех начальникне.
8. Сергей Михайлович **Грачева** — сборочнăй цехри слесаре.
9. Михаил Иванович **Григорьева** — котельщике.
10. Николай Павлович **Доброноженкăна** — слесаре.
11. Денис Петрович **Кисленкăна** — электростанци начальникне.
12. Иван Федорович **Коноплева** — слесарь-автоматчике.
13. Алексей Константинович **Кабаевскине** — цех начальникне.
14. Иван Степанович **Кузьменкăна** — токаре.
15. Николай Сильверстович **Крупскине** — завод начальникне.
16. Екатерина Васильевна **Кручининăна** — токаре.
17. Зоя Михайловна **Легостинăна** — токаре.
18. Иван Васильевич **Мещерякова** — комплекслă бригадăн начальникне.
19. Иван Иванович **Максимова**—электростанци кочегарне.
20. Федор Степанович **Макшанова** — тимӗрçе.
21. Тамара Алексеевна **Моисеевăна** — цех начальникне.
22. Григорий Федорович **Никишина** — плавильщике.
23. Леонид Елисеевич **Петренкăна** — кулиснăй бригадăн бригадирне.
24. Анна Ивановна **Ручкинăна** — токаре.
25. Василий Степанович **Родионова** — слесаре.
26. Иван Яковлевич **Сахнона** — слесаре.
27. Федор Семенович **Степашкина** — мастера.
28. Александра Васильевна **Самаркинăна** — сборочнăй цехри работницăна.
29. Евгений Евгеньевич **Тарадея** — комплекслă бригадăн начальникне.
30. Николай Данилович **Убасьева** — слесаре.
31. Клавдия Михайловна **Филатовăна** — разборочнăй цехри работницăна.
32. Серафим Васильевич **Чиликина** — комплекслă бригадăн начальникне.
33. Павел Николаевич **Шалаева**—цех начальникӗн заместительне.
34. Николай Михайлович **Шепеленкăна** — комплекслă бригадăн начальникне.
35. Леонтий Георгиевич **Шерстюка** — заводри партбюро секретарьне.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиум Секретарӗн ӗçӗсене тăваканӗ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули. 1943 çулхи майăн 11-мӗшӗ.

ВЦСПС-па Вăрмана сыхлас тата лартса ӳстерес ӗçсен СССР Совнаркомӗ çумӗнчи Тӗп управленийӗнче

Профсоюзсен Пӗтӗм Союзри Центральный Совечӗпе Вăрмана сыхлас тата лартса ӳстерес ӗçсен СССР Совнаркомӗ çумӗнчи Тӗп управленийӗ лесхозсен Пӗтӗм Союзри социализмлă ăмăртăвӗн 1943 çулхи пӗрремӗш кварталти итогӗсене пăхса тухнă.

Вӗсем Чăваш республикинчи **Вăрнар лесхозне** (директорӗ Григорьев юлташ) **виççӗмӗш преми** пама йышăннă.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Майăн 10-мӗшӗнчи каçхи пӗлтерӳрен

Майăн 10-мӗшӗнче Кубань çинче, Новороссийскран çурçӗр-хӗвелтухăçнерехре, пирӗн войскăсем тăшмана хирӗç вăйлăн персе тăнă. Пирӗн авиаци тăшман укреплениййӗсене тата пехота пухăнса тăнă вырăнсене пыра-пыра çапнă.

Фронтăн ытти участокӗсенче нимӗнле паллă улшăнусем те пулман.

* * *

Кубань çинче, Новороссийскран çурçӗр-хӗвелтухăçнерехре, пӗр соединенин артиллерисчӗсем тăшман артиллерийӗн 26 батарейине тата миномётсен 12 батарейине пусарнă, темиçе зенитнăй оруди пӗтерсе тăкнă, тăшманăн темиçе дзочӗпе блиндажне аркатнă. Обзалов юлташ командир пулса ертсе пыракан артиллеристсем 2 танка персе çӗмӗрнӗ тата нимӗç пехотине пӗр ротăна çити пӗтерсе тăкнă. Сержант Варач, старши лейтенант Сигарев, старши лейтенант Вастриков, лейтенант Куденко летчиксем пӗр кун хушшинчи сывлăшри çапăçусенче кашниех нимӗçсен икшер самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Лисичанск районӗнче пехотăн 2 батальонӗ тата тăшманăн 15 танкӗ пирӗн позицисене атакăланă. Пирӗн боецсем малтан кăшт чакнă, унтан флангран вирлӗн пырса çапса нимӗçсене каялла хăваласа янă. Çав çапăçура нимӗçсен 9 танкне персе çӗмӗрнӗ е çунтарса янă, 300 гитлеровеца çити пӗтерсе тăкнă. Тепӗр участокра пирӗн боецсем тăшманăн 4 контратакине сире-сире пăрахнă. Çапăçу хирӗнче нимӗçсен çунакан 2 танкӗ тата 100 ытла вилли выртса юлнă.

* * *

Дон çинчи Ростовран хӗвеланăçнерехре тăшмана хирӗç артиллерирен персе тăнă. Пирӗн чаçсем нимӗçсен 2 орудине, 6 пулеметне пӗтерсе тăкнă, 4 блиндажа тата 5 дзота аркатнă. Пăшалсемпе пулеметсенчен персе пирӗн подразделенисем тата разведка тăвакан группăсем нимӗç пехотин пӗр ротине ытла пӗтерсе тăкнă.

* * *

Волхов фронтӗнчи пӗр участока тăшман артиллери нумай илсе пырса тăратнă. Пирӗн разведчиксем нимӗç батарейисем ăçта вырăнаçнине тӗплӗн тӗпчесе пӗлнӗ. Разведка пӗлтернипе усă курса, пӗр соединенин артиллерисчӗсем тăшман артиллерин батарейисем çине вăйлăн пеме пуçланă. Сăнанă тăрăх тата сывлăшри разведка каласа панă тăрăх, тăшман батарейисен чылай пысăк пайне пӗтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград облаçӗнчи районсенчен пӗринче кӗрешекен партизансен отрячӗ шоссе çулӗ çинчи нимӗç колоннине сасартăк атакăланă. Пăшалсемпе пулеметсенчен персе тата гранатăсем ывăтса, 52 гитлеровеца вӗлернӗ, 29-ӗшне амантнă. Партизансем 6 пулемет, автоматсем, винтовкăсем тата патронсем нумай тытса илнӗ. Ленинград партизанӗсен тепӗр отрядӗнчи подрывниксен группи боеприпассем тиенӗ нимӗç эшелонне ӳпӗнтерсе янă. Тӳнсе кайнă вагонсем çунма пуçланă, вӗсенче пулнă боеприпассем темиçе сехет хушши сирпӗнсе тăнă.

Майăн 11-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Майăн 11-мӗшӗ ыран тенӗ чух çӗрле Кубань çинче, Новороссийскран çурçӗр-хӗвелтухăçнерехре, пирӗн войскăсем тăшмана хирӗç çапăçнă. Фронтăн ытти участокӗсенче нимӗнле паллă улшăнусем те пулман.

Пирӗн карапсем Баренц тинӗсӗнче тăшманăн транспортне путарнă.

* * *

Кубань çинче, Новороссийскран çурçӗр-хӗвелтухăçнерехри районра, пӗр чаçăн боецӗсем тăшманăн контратакине сирсе янă. Çапăçура пӗр танк, 2 бронемашина тата 200 гитлеровеца çити пӗтерсе тăкнă. Нимӗçсенчен 6 пулемет, 3 миномет тата автоматсемпе винтовкăсем нумай тытса илнӗ. Шпанин юлташ ертсе пыракан подразделени тăшман траншейисене штурмласа йышăнса илнӗ, çавăн чухне 80 нимӗç салтакӗпе офицерне пӗтерсе тăкнă.

* * *

Хӗвеланăç фронтӗнче пирӗн чаçсем 150 нимӗç салтакӗпе офицерне ытла вӗлернӗ, 4 оруди тата минометсен 3 батарейине аркатнă. Сывлăшри çапăçура нимӗçсен «Хейнкель-126» йышши самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Балаклейăран кăнтăртарахра артиллери вăйлăн персе тăнă хыççăн 200 нимӗç автоматчикӗ пирӗн позицисене çапăçса пырса пӗлме хăтланнă. Сехет çурă пынă тытăçура пирӗн боецсем 100 гитлеровеца çити вӗлернӗ. Ытти нимӗç автоматчикӗсем вара пӗр йӗркесӗр хăйсен малтанхи позицийӗсем патне чакнă.

* * *

Севск районӗнче пирӗн артиллеристсем нимӗç пехотин колонни çине сасартăк пенӗ. Гитлеровецсен пӗр батальонне çити сапаласа янă, пӗр пайне пӗтерсе тăкнă. Пӗр чаçăн разведка тăвакан отрячӗ тăшман тăракан вырăна кӗрсе кайнă та нимӗçсен 3 блиндажне сирпӗнтерсе янă. Унтан трофейăсем тытса илсе тата тыткăна илсе, пирӗн разведчиксем хăйсен чаçне таврăннă.

* * *

Волхов фронтӗнче пирӗн разведка тăвакан группа нимӗç дзотне йышăнса илнӗ. Тăшман контратака тунă, анчах вăл контратакăна пирӗннисем сирсе янă, гитлеровецсен çапăçу хирӗнче 40 вилӗ выртса юлнă. Тепӗр участокра пирӗн артиллери нимӗçсен 9 дзочӗпе блиндажне аркатнă, 3 оруди, 7 миномет, 3 автомашина тата грузсем тиенӗ темиçе лава пӗтерсе тăкнă.

* * *

Украинăра кӗрешекен партизансен отрячӗ нимӗç гарнизонне сасартăк атакăланă. Партизансем 60 гитлеровеца вӗлернӗ тата хӗçпăшалсемпе боеприпассен склачӗсене сирпӗнтерсе янă. Щорс ячӗпе хисепленекен отрядри партизансен ушкăнӗ нимӗç самолет-разведчикне винтовкăсемпе пенӗ. Самолет управленине çухатнă та шыва ӳкнӗ.

* * *

Смоленск облаçӗнчи Туманово районӗнче гитлеровецсем инвалидсен çуртне аркатса тăкнă, унта 195 инвалид пурăннă пулнă. Нимӗçсен фашистла ирсӗрӗсем çав района оккупациленӗренпе хӗрарăм-инвалидсенчен нумайӗшне выçăпа асаплантарса вӗлернӗ. Моторина, Суханова тата Петрова инвалидкăсем яла апат-çимӗç шырама кайнă пулнă. Нимӗç салтакӗсем вӗсене çул çинче тытнă та персе вӗлернӗ. Хӗрлӗ Çар чаçӗсем Туманово районне нимӗç оккупанчӗсенчен тасатнă тӗле çав инвалидсен çуртӗнче мӗнпурӗ те 58 инвалидка çеç чӗрӗ тăрса юлнă.

Çулпуç приказӗпе хавхаланса

ÇӖМӖРЛЕ, майăн 11-мӗшӗ. (**Телефонпа**). «Большевик» заводри рабочисемпе работницăсем, аслă çулпуçăн Сталин юлташăн приказӗпе хавхаланса, тунă çитӗнӳсене çирӗплетсе татах та пысăк çитӗнӳсем тăвассишӗн кӗрешеççӗ. Завод коллективӗ апрель уйăхӗнчи ӗç планне 106 процент пурнăçларӗ. Май уйăхӗнче производство планне 120 процентран кая мар тултарма, продукцин хăйне ларакан хакне 5 проц. чакарма обязательство илчӗ.

Юлашки вăхăтра уйрăмах электриксем хушшинче ăмăрту анлăн сарăлса пырать. Закалябин, Е. Ширшов, Шарашкин юлташсем хăйсене панă заданисене куллен 225 процент тултараççӗ. Çавăн пекех йывăç çуракансем хушшинче те ӗç тухăçлăхӗ ӳссех пырать.

И. Шустин,
Завод директорӗ.

Нормăсене ирттерсе тултараççӗ

Шупашкарти 1-мӗш номерлӗ типографири рабочисемпе работницăсем социализмлă ăмăртура çӗнӗ ӳсӗмсем тăваççӗ. Наборнăй цехра ӗçлекенсем З. Благоразумова кулленхи ӗç нормине 144 процент, Шапиро 124 процент, Мафижева 121 процент тултарса ӗçлеççӗ.

Çавăн пекех переплетнăй цехра ӗçлекенсем те лайăх ӗç тӗслӗхӗсем кăтартаççӗ. Белинсон, Степашкина, Соболева юлташсем кашни кунах нормăна 200 процента çити тултараççӗ.

Ф. Малышкин.

Колхозлă уйхирсенче стахановла ӗçлесе, тăван Хӗрлӗ Çара пулăшар!

Тӗштырăсене акса пӗтерчӗç, çӗрулми лартаççӗ

ВАРНАР, майăн 11-мӗшӗ. (**Телефонпа**). Районри колхозсем çурхи тырăсене вăхăтра акса хăварас тӗлӗшпе организованнă ӗçлерӗç. Майăн 8-мӗшӗ тӗлне 8.544 гектар акса, пур колхозсем те тӗштырăсемпе пăрçасене акса пӗтерчӗç. Халӗ вӗсем ытти культурăсене акмалли плана пурнăçлаççӗ.

Ярославль облаçӗнчи колхозниксемпе колхозницăсен патриотла чӗнӗвне йышăнса илсе, çӗрулми шывăн Оборона фондӗ валли те нимӗç захватчикӗсене хирӗç кӗрешекен колхозниксемпе колхозницăсене пулăшма пирӗн районри колхозсем çураки планӗпе ирттерсе 500 гектар тӗштыра акса хăварӗç.

Çураки ӗçӗсен пахалăхӗ те кăçал лайăххăн пырать. Тырăсене сеялкăсемпе 6.500 гектар акнă, МТС хăйӗн тракторӗсемпе 1.800 гектар акса ӗлкӗрнӗ.

Халӗ пур колхозсенче те çӗрулми лартаççӗ, пахча-çимӗç лартма çӗр хатӗрлеççӗ. Майăн 13-мӗшӗ тӗлне районри пур колхозсенче те çураки ӗçӗсем пӗтӗмпех вӗçленеççӗ.

С. Коротков.
ВКП(б) Вăрнар райкомӗн секретарӗ.

Çӗрулми, пахча-çимӗç лартса пӗтерчӗç

ШАХАСАН. (**Хамăр корр., телефонпа**). Районри малта пыракан колхозсем çуртырăсем акса пӗтерсе, çӗрулми тата ытти пахча-çимӗçсем лартма тытăнчӗç. Вăрман Энӗшри «Свобода» колхоз çӗрулмине тата ытти пахча-çимӗçсене те лартса пӗтерчӗ. 25 гектар çӗрулми лартрӗ, 8 гектар кантăр акрӗ. Оборона фончӗ валли 3 гектар тулă, 3 гектар сӗлӗ акса хăварчӗ. Калиновкăри Калинин ячӗпе тăракан колхоз та çуртырăсем акса пӗтерчӗ. Оборона фончӗ валли 10 гектар сӗлӗ акрӗ. Колхозниксем çуракинче Сталин юлташăн майăн 1-мӗшӗнче кăларнă приказӗпе хавхаланса ӗçлерӗç. Николаева, Никонова сухаçăсем ӗç нормине 150-шар процент тултарса ӗçлерӗç. Çавăн пекех Максимов, Данилов, Федоров колхозниксем нормăна икӗ хут ытла тултарса ӗçлерӗç. Вӗсем 6 кун хушшинче 15—20-шер ӗçкунӗ ӗçлесе турӗç. Колхоз 2 гектар çине сахăр кăшманӗ, 0,5 гектар çине сухан лартса хăварчӗ. Молотов ячӗпе тăракан колхоз 12 гектар çине çӗрулмине яровизацилесе лартрӗ тата 6 гектар кантăр, пӗр гектар сахăр кăшманӗ лартрӗ.

Хăшпӗр колхозсем çуракине тӳсме çук япăх туса пыраççӗ. Ленин ячӗпе тăракан колхоз (председателӗ Михайлов) 305 гектар тӗштырă акмалла пулсан, паянхи куна 89 гектар çеç акнă. Çакăн пек кая юлса пыни туртăм вăйӗпе туллин усă курассине йӗркелеменнинчен, колхозниксене ӗçе тӗрӗс мобилизацилеменнинчен килет. Колхозниксем нихăшӗ те нормăна тултарса ӗçлемеççӗ. Колхозра массăллă ăнлантару ӗçӗ пачах çук.

В. Веселов.

Килес çул валли вăрлăх хатӗрлесе хăварар

ХӖРЛӖ ЧУТАЙ. (**Хамăр корр.**). ЧАССР Наркомземӗ панă план тăрăх кăçал районри колхозсен вăрлăхлăх 52 гектар çурхи тулă, 538 гектар сӗлӗ, 256 гектар пăрçа, 115 гектар вика тата ытти культурăсене пурӗ 37 гектар акмалла. Вăрлăх хатӗрлес ыйту тырпул тухăçлăхне ӳстерсе пырас ӗçре пысăк вырăн йышăнать. Çавăнпа та кăçал вăрлăх участокӗсене чи лайăх сортлă тырăсем акса хăвармалла. Вăрлăх участокӗсем çинче çуракине уйрăмах паха туса хăвармалла.

Хӗрлӗ Чутай районӗнче чылай колхозсем вăрлăх участокӗсенче çураки ӗçӗсене пысăк пахалăхпа туса ирттерчӗç. Пур колхозсем те пекех вăрлăхлăх тырă акма чи лайăх участоксем уйăрнă, лайăх тасатнă, яровизациленӗ вăрлăхсемпе акаççӗ. «Коминтерн» колхоз чи лайăх участоксене уйăрса вăрлăхлăх 16 гектар сӗлӗ, 6,25 гектар тулă, 5 гектар пăрçа, 8 гектар вика акрӗ. Ку участоксем çинче çуракине 3 кун хушшинче туса ирттерчӗ, сеялкăсемпе акрӗ.

Вăрлăх участокӗсене асăрхаса пăхса тăма колхоз лиçӗ звено организацилерӗ, звеносен ӗçне ертсе пыма курсран вӗренсе тухнă колхозницăсене лартрӗ.

Чапаев ячӗпе тăракан тата «Агроном» колхозсенче те вăрлăх участокӗсене кӗске срокра акса хăварчӗç. Вăл участоксене удобрени нумай хурса лайăх çемçетрӗç. Тырра агротехника правилисене çирӗп пăхăнса акрӗç.

Вăрлăх участокӗсене çавăн пек тăрăшса акман тӗслӗхсем те Хӗрлӗ Чутай районӗнче пур-ха. Калинин ячӗпе тăракан колхозра çуракине апрелӗн 22-мӗшӗнче тухнă пулсан та, вăрлăх участокӗсем çине тырра майăн 6-мӗшӗнче çеç акнă. Уйрăм колхозсенче вăрлăх участокӗсем çине тырра алăпа акаççӗ.

Х. Лисин.

Çитменлӗхсене вăхăтра сирсе, çуракине хăвăрт туса ирттерчӗç

КАЛИНИНО, майăн 10-мӗшӗ. (**Хамăр корр.**). Хăмăшри Папанин ячӗпе тăракан колхозра çураки пуçланас умӗн пысăк çитменлӗхсем пурччӗ. Çав çитменлӗхсене вăхăтра сирсе, колхоз çуракине лайăх хатӗрленсе тухрӗ. Лашасене пăхас ӗçри обезличкăна пӗтерчӗ, начар ӗçлекен конюхсене ӗçрен кăларса, вӗсен вырăнне комсомолкăсене лартрӗ. Вӗсем лашасене лайăх пăхса çуракине мăнтăр кăларчӗç. Çапла вара колхоз çураки ӗçне 8 талăк хушшинче вӗçлеме пултарчӗ.

Пӗтӗм тырăсен 42 процентне сеялкăсемпе акрӗç. Колхозри комсомолецсемпе çамрăксем сухаçăсем пулса ӗçлерӗç. Вӗсемех агитацилле ăнлантарулла ӗçе те туса пычӗç. М. Тераськов, Н. Скворцов агитаторсем хăйсем куллен 1,75-шер гектар сухаласа пычӗç. Çураки вăхăтӗнче бригадăсенче стена хаçачӗсем тухрӗç, унта лайăх ӗçлекенсене анлăн кăтартнă, ҫителӗксӗр ӗçлекенсене критикăланă. Çакă вăл кашнине сынна пӗр пек тăрăшса ӗçлеме пикентерчӗ.

Вăтам шутпа кашни сухаçă талăкра 1,30 гектартан кая мар сухаларӗ. Организованнă ӗçленипе колхоз çурхи тырăсене планпа пăхнинчен чылай нумайрах акрӗ. Оборона фончӗ валли те виçӗ гектар çине тӗштырă акса хăварчӗ. Халӗ колхоз кантăр вырăнӗсене сухалать тата çӗрулми лартма хатӗрленет.

С. Шадин.

Тăватă красноармеецăн ашшӗ

Вăрнар районӗнчи Анаткас Хапăс колхозӗн членӗ Петр Варламович Варламов юлташ колхозри чи лайăх агитатор, чи лайăх ӗçлекен стахановец. Вăл 66 çулта. Унăн тăватă ывăлӗ фронтра нимӗç захватчикӗсене хирӗç паттăррăн çапăçаççӗ.

Ялта колхоз организациленӗренпех Варламов юлташ сухаçă пулса ӗçлет, кашни çулах пысăк тухăçлăхпа ӗçлесе пример кăтартса пырать. Иртнӗ çулта Петр Варламович хăй пӗччен 427 ӗçкунӗ ӗçлесе илчӗ. Кăçал икӗ касăллă плугпа кунне 1,1 гектар сухаламалла пулсан, Варламов юлташ 1,33 гектар сухалать, ӗç нормине 125 процент тултарса пырать.

— Сталин юлташ чӗннипе эпӗ малашне те тухăçлăн ӗçлесе пырăп, пӗтӗм вăя фронта пулăшнă çӗре хурăп, — терӗ Петр Варламович Варламов юлташ Сталин юлташăн приказне вуланă хыççăн.

Олантаев.

Комсомол йышӗ ӳсрӗ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Колхоз çамрăкӗсен комсомол ретне кӗрес туртăмӗ пысăк. Комсомолăн районри организацийӗ ӳссех пырать. Çак кунсенче «Динамо» тата «Дубовка» колхозсенче комсомолăн пуçламӗш организацийӗсем тунă. «Динамо» колхозри организацире 7 комсомолец, «Дубовка» колхозри организацире 11 комсомолец.

(**«Октябрь ялавӗ»**).

ВУЛАВ ÇУРЧĔСЕН СОВЕЧĔСЕМ

Вулав çурчĕсем авал ĕçлетчĕр тесен, вĕсен ĕçне актива хутшăнтарас пулать. Ялсенчи вулав çурчĕсем массăллă çутĕçĕн центрĕсем пулса тăмалла. ВКП(б) Обкомĕн пропагандăпа агитаци енĕпе ĕçлекен секретарĕ Андреев юлташ «Чăваш Коммуни» хаçатăн мартăн 31-мĕшĕнчи номерĕнче вулав çурчĕсем мĕнле ĕçлемелли çинчен тĕплĕн çырса кăтартрĕ. Çав ĕçсене лайăх туса пырас пулсан, вулав çурчĕ тавра вырăнти интеллигенцие, колхоз стахановецĕсене явăçтармалла.

Мĕнле хутшăнтармалла-ха вĕсене çак ĕçе? Кашни ялсовечĕнче учительсем, комсомолецсем, медицина работникĕсем, хăшпĕр ялсенче агрономсем, ветеринар врачĕсем пур, кашни колхозрах стахановла ĕçлекен колхозниксем тата ытти активла çынсем нумай. Çав çынсен пултарулăхне çăнаса пĕлес пулать. Вара колхоз пухăвĕнче вулав çурчĕн советне суйламалла чухне çав çынасем хушшинчи çынсене суйламалла, хăюллăн сĕнмелле. Вулав çурчĕн советне 9—17 çынна çитичен суйлама юрать. Вĕсем пĕр çултăлăклăх срока суйланаççĕ. Колхоз пухăвĕнче суйланă совет членĕсене ялсовет исполкомĕ çирĕплетет. Çав советăн председательне вулав çурчĕн пуçлăхĕ пулмалла.

Çак совет вара ĕç планне пăхса сӳтсе-явмалла, вулав çурчĕн ĕçне ялти ытти актива хутшăнтарас пирки ĕçлемелле, заседанисем туса партипе совет органĕсене тата Çутĕç Халăх Комиссариачĕ панă кăтартусене мĕнле пурнăçлани тата мĕнле пурнăçламалли çинчен сӳтсе-явмалла, вулав çурчĕн ĕçĕсем çинчен вулав çурчĕн заведующийĕн докладне, советăн уйрăм членĕсен тата кружоксене ертсе пыракансен ĕçĕсем çинчен отчетсем итлемелле. Çакăнпа пĕрлех колхозсене социализмла ăмăртăва сарса яма, вырăнти культурăллă вăя массăллă-политикăллă çутĕçне лайăхрах тума пулăшмалла, вулав çурчĕн бюджетне расходланине, кирлĕ ремонта вăхăтра тунине, вулав çуртне таса та йĕркеллĕ тытнине асăрхамалла.

Вулав çурчĕсен совечĕсем актива тĕпленсе явăçтарса пыма пĕлнĕ çĕрте вулав çурчĕсем нумайĕшĕ ялти политикăллă çутĕçĕн центрĕсем пулса тăчĕç. Тĕслĕхрен Елчĕк районĕнчи Байдеркаври вулав çурчĕн ĕçне илме пулать. Вулав çурчĕ заведующийĕ пулса Хĕрлĕ Çартан таврăннă Клементьев юлташ ĕçлет. Çак вулав çурчĕн совечĕ 12 çынран тăрать тата 18 агитатор пĕрлешсе ĕçлет. Ялсовет исполкомĕн председателĕ Скворцов юлташ, вăл агитаторсене ертсе пыракан, вулав çурчĕн ĕçне лайăхлатма хастарлăн пулăшса пырать. Вулав çурчĕ теса Наглядлă агитаци ĕçне лайăхлатса вырăнти вĕçĕ самоучка-художнике явăçтарнă. Вулав çурчĕ çумĕнче ПВХО, ГСО тата çарĕç кĕтесне организациленĕ. «Отечественнăй вăрçă фронтовикĕсем» ятлă витринăсем тунă, юлашки хыпарсен хăми тата справкăсем памалли сĕтел организациленĕ. Çакăн пек ĕçленине пула колхоз танкен «Осоавиахим» кассăне тума 45 пин тенкĕ укçа пуçтарса панă. Государство умĕнчи пур обязательствăсене те срокчен тултарса пырать.

Байдеркаври вулав çурчĕ ялти агитацилĕ-массăллă ĕçе лайăх туса пырать. 1942 çулта 252 калаçу туса ирттернĕ, 20 номер стена хаçачĕ кăларнă. Çакăн пек ĕçлекен вулав çурчĕсем республикăра сахал мар. Анчах нумай вулав çурчĕсем кирлĕ таран ĕçлемеççĕ-ха. Хăшпĕр вулав çурчĕсен заведующийĕсем актива явăçтарас ĕçе хакламаççĕ. Çавна пула вулав çурчĕ вара начар ĕçлет. Вулав çурчĕ таре актива ытларах явăçтармалла. Массăллă-политикăллă çутĕçне вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек йĕркелесе ямалла.

А. Григорьева.

ЧАССР Наркомпросĕн политикăллă çутĕç кабинечĕн заведующийĕ.

ФРОНТОВИКСЕН ÇЕМЬИСЕНЕ—ТИВĔÇЛĔ ПУЛĂШУ

ÇĔМĔРЛЕ. Комбинатра фронтовиксен çемьисене пулăшас ĕçе партипе профсоюз тата комсомол организацийĕсем кăна мар, пĕтĕм коллектив туса пырать.

Завком çумĕнче ятарласа комисси ĕçлет. Комисси юлашки вăхăтра кăна 73 çынна кирлĕ пулăшу панă.

Фронтовиксен çемьисене пулăшма уйрăм фонд тунă. Çав фонда 24 пин тенкĕ укçа пуçтарнăччĕ. Фронтовиксен çемьисем валли цехсенчи отходсенчен 48 пукан, 150 табуретка, 60 сĕтел, 50 тумбочка, 75 такана тунă, пĕр хут воскресник ирттерсе 300 кубометра яхăн вутă хатĕрленĕ.

Çар çыннисен çемьисене пулăшас ĕçе ОРС та куллен туса пырать. Вăл хăйĕн фондĕнчен 5 тонна купăста, çавăн чухлех помидорпа хăяр, 458 кĕпе, 33 ача костюмĕ, 260 метр тĕрлĕрен мануфактура, 86 мăшăр çăматă, 76 мăшăр ача атă-пушмакĕ панă.

Фронтовиксен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе Хĕрлĕ Çарăн начальство составĕн арăмĕсем паха ĕç пуçарчĕç. Вĕсем Хĕрлĕ Çар командирĕсен çемьисем мĕнле условире пурăннине, мĕнле пулăшу кирлине килрен çӳресе тĕрĕслерĕç. Çакăн хыççăн хăйсем хушшинче укçа тата ытти япаласем пухма тытăнчĕç. Кĕске вăхăт хушшинчех темиçе çĕр тенкĕ укçа пухрĕç, 6 çынна ĕçе тата 5 ачана яслисемпе садсене вырнаçтарчĕç.

Нумаях пулмасть Хĕрлĕ Çарăн начальство составĕн арăмĕсен районри пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура пулнисем фронтовиксен çемьисене куллен пулăшса пыма, фронтран аманса килнĕ пĕчченах боецсене кĕпе йĕмсем, тумтирсем юсаса е çĕнĕрен çĕлесе пулăшма, ашшĕ-амăшĕсĕр пурăнакан ачасене яслисене вырнаçтарма, ачасен çуртне кулленех пулăшса тăма пулчĕç. Вăрнар районĕнчи командирсен арăмĕсене социализмлă ăмăртăва чĕнчĕç.

П. Анисимов.
Х. Лисин.

ВĂРМАР. Хоруйĕнчи «Пионер» колхоз юлашки кунсенче фронтовиксен çемьисене тата фронтран аманса таврăннă красноармеецсемпе командирсене пулăшас тĕлĕшпе чылай ĕçсем турĕ. Хĕлле вĕсем валли 115 кубла метр вутă кӳрсе пачĕ, 35 çысна çури пачĕ тата выльăх апачĕ çитмен çемьесене выльăх апачĕ парса пулăшрĕ.

Халĕ фронтовиксен çемьисене пулăшма 50 килограмм çăнăх, 250 килограмм çĕрулми, 2 килограмм пыл. çу т. ыт. те пухса хунă.

А. Иванов.

Пирĕн земляксем

ТАНКИСТ

Пĕррехинче пирĕн часть нимĕçсен темиçе танкĕ наступлени тунине сирсе тăнă. Тăшман танкĕсем 3—4 хут йышлăрах пулнă. Советăн хăюллă танкисчĕсем шиклессе ӳкмен. Тăшманăн танкĕсене хирĕç хăюллăн атакăна тухнă. Темиçе сехет хушши пынă хаяр çапăçура вĕсем тăшманăн 6 танкне персе çĕмĕрнĕ, ыттисем вара каялла çаврăнса тарнă. Çав çапăçура Владимир Христофорович Христофоров (Шăхасан районĕнчи Вăрман Кипек ялĕнчен) уйрăмах палăрнă.

Çапăçура паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн Христофоров юлташа старшина ятне панă, командовани тав тунă.

Владимир Христофорович ун чухне çакăн пек тупа тунă:

— Чĕре тапма чарăниччен ылханлă тăшмана пĕтерсе пырăп. Эпĕ тăван колхозниксем умĕнче тăшмана хирĕç паттăррăн кĕрешме, кирлех пулсан, çĕнтерӳшĕн хамăн пурнăçа та пама сăмах панă.

Пĕр ирхине Христофоровсен чаçĕ тăшманăн наступлени тăвакан танкĕсемпе пехотине чарса лартма приказ илнĕ. Пирĕн танкистсем контратакăна лайăх хатĕрленнĕ.

Рота командирĕ Быканов юлташ тепĕр 10—15 минутăран наступлени пуçланасси çинчен пĕлтернĕ. Владимир Христофорович машинăна тимлĕн тĕрĕслесе хаяр çапăçăва хатĕрленнĕ.

Атака пуçланнă. Тăшман вăйлăн хирĕç тăнă. Анчах совет танкисчĕсене нимĕнле вут-хĕм те тытса чарма пултарайман. Вĕсем малалла, тăшманăн çирĕплетнĕ позицийĕсем патнелле çĕмĕрсе кĕнĕ. Противник пирĕн танксене хирĕç 30 танк çапăçăва кĕртсе янă.

Хаяр та йывăр çапăçу хĕрӳленсе пынă. Владимир Христофорович тăшман танкĕсем хушшинех кĕрсе кайнă. Унăн хăватлă танкĕ тăшманшăн хăрушă вăй пулса тăнă. Орудирен тӳрремĕн персе, унăн экипажĕ тăшманăн пĕр танкне аркатнă. Анчах вĕсене хирĕç татах тăшманăн 6 танкĕ кĕрешнĕ. Христофоров оруди патне хăй тăнă. Вăл часах тăшманăн икĕ танкне çĕмĕрчĕ ыттисем каялла чакма тытăннă.

Темиçе минутăран тăшман танкĕсем каллех атака пуçласа янă. Христофоров юлташ нимĕçсем çине вĕçĕ-хĕррисĕр вут-хĕм тăкма тытăннă. Сасартăк унăн танкĕ ĕçлеме чарăннă.

Танк çĕмĕрĕлнĕ пулсан та, вăл паттăррăн çапăçса тăшмана хăй çывăхне яман.

Çав кун хаяр та юнлă çапăçура пирĕн земляк—Владимир Христофорович тăшманăн 3 танкне, 3 орудине, 3 пулеметне тата вуншар фашиста пĕтерсе тăкнă, 2 дзота ишĕлтернĕ, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă

Рота командирĕ Быканов юлташ Христофоров юлташăн ашшĕ патне çыру çырса пĕлтернĕ. Унта вăл çапла çырать: «Сире пултаруллă та хăюллă ывăл çитĕнтернĕшĕн тав тăватпăр. Сирĕн Володя сывă. Эпир унăн паттăр та хăюллă ĕçĕсемшĕн савăнатпăр. Вăл нимĕç вăрă-хурахĕсене хирĕç хăйĕн пурнăçне шеллемесĕр кĕрешет. Нумаях пулмасть Володя Христофоров хаяр çапăçура тăшмана пысăк çухату кӳчĕ. Хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн ăна Правительство наградине пама тăратнă.

Рота командирĕ Быканов».

В. Веселов.

ЭПИР—ПУЛАС СНАЙПЕРСЕМ

КАЛИНИНО. Педучилищĕре вĕренекен ачасем пăшалпа тĕл перес тĕлĕшпе тренировкăллă занятисем туса ирттерчĕç. Ворошиловла тĕл персе нумай очко илчĕç. II «В» класри А. Васильев 25 метртан виçĕ патронпа персе 27 очко илчĕ. Çавнашкалах I «В» класри И. Никандров та 2 патронпа 19 очко, М. Павлов 14 очко тата ыттисем те лайăх тĕслĕхсем кăтартрĕç.

— Эпир çар ретне тăрсан паттăр снайперсем пулăпăр,—теççĕ вĕренекенсем

Г. Андреев.

Квартал планне икĕ уйăхра пурнăçлассишĕн

КАНАШ. (Хамăр корр.). Асхвари сельпо (председателĕ Рудакова юлташ) иккĕмĕш квартал планне икĕ уйăхра пурнăçлассишĕн ăмăртăва тухрĕ. Апрель уйăхĕнчи таварçаврăнăш планне сельпо 227 процент пурнăçланă, планран ирттерсе 180.985 тенкĕлĕх тавар сутнă.

Лайăх ĕçлекен дружина начальникĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Шмидт ячĕпе тăракан колхозăн пушар дружинин начальникĕ Хĕрлĕ Çара кайсан, ун вырăнне 15 çулхи комсомолеца Таллеров юлташа лартрĕç. Таллеров шанса панă ĕçе тăрăшса тума тытăнчĕ. Пур итемсем çине те хуралçăсем парса, вĕсене мĕнле сыхламаллине вĕрентрĕ. Кашни кил умнех 5—6 витре кĕрекен каткапа шыв ларттарса тухрĕ. Пушар сӳнтерекен дружинецсемсĕр пуçне тата шкул ачисемпе пионерсене те пушара мĕнле сӳнтермеллине вĕрентрĕ. Кăçал колхозăн пĕвипе кĕперне çурхи шыв илсе кайма тытăнчĕ. Çак пĕвене Таллеров тăрăшнипе çăлса хăварчĕç. Пушар хатĕрĕсем лайăх тăни, хуралçăсем лайăх хураллани Нĕркеçри М. Волкова çуртне çунса каясран çăлса хăварчĕ. Кирек хăçан та Таллеров дружинецĕсем сӳнтерме чи малтан çитеççĕ. Таллеров хăйĕн ĕçне яланах тĕплĕ туса пырать. Пушар дружинисен начальникĕсемшĕн Таллеров пример пулса тăрать.

Н. Виноградов.

Фронтовиксен çырăвĕсем

ИРСĔР ТĂШМАНСЕНЕ ТАВĂРАТПĂР

Эпĕ хам Шăхасан районĕнчи Тури Сурăм ялĕсем. Хĕрлĕ Çар ретне киличчен учитель пулса ĕçлерĕм. 4 çул хушши Хĕрлĕ Çар ретĕнче пурăнатăп. Çак вăхăт хушшинче эпĕ питĕ нумай куртăм, нумай вĕрентĕм. Белофинсемпе те çапăçрăм, халĕ вара фашистла вăрă-хурахсене хирĕç çапăçатăп. Хамăр командованин ответлă ĕçĕсене лайăх туса пынăшăн мана Совет Правительстви «За боевые заслуги» медаль парса наградăларĕ. Эпир, Хĕрлĕ Çар воинĕсем, Совет правительствипе совет халăхĕ пирĕн умма лартнă задачăсене чаплăн пурнăçласа пыратпăр.

Нумай пулмасть эпир виçĕ яла тăшмантан тасатса ирĕке кăлартăмăр.

П. ятлă яла нимĕçсем хăйсем тухса тарас умĕн çичĕ çĕртен вут тивертсе хăварнă. Урамсенче нимĕçсем вĕлерсе хăварнă мирлĕ совет гражданĕсен ӳчĕсем унта та кунта йăваланса выртаççĕ.

Эпир пĕр çунакан пӳрт патне пытăмăр. Пысăк пӳртĕн пĕренисем шатăртатса çунаççĕ, хура тĕтĕм пĕлĕт пек йăсăрланать. Çав пӳртрен инçех те мар пĕр хĕрарăм ӳчĕ выртать. Вăл хăйĕн пĕчĕк ачине ытакланă. Эпир ун патне пырсах пăхрăмăр та, пирĕн куççулĕсем юхса анчĕç. Пуля хĕрарăмăн сылтăм куçĕнчен кĕрсе ĕнси витĕр тухнă, çăварĕнчен кăпăклă юн юхса тухнă. Ачин вара сăн-сăпачĕ те çук, вăл пĕтĕмпе юн ăшĕнче, унăн пичĕ чĕп-чĕр какай кăна. Çав вăхăтра пирĕн пата нимĕçсенчен пытанса юлма ĕлкĕрнĕ çынсем пырса тăчĕç. Вĕсем çапла каласа пачĕç:

— Çак хĕрарăмăнне нимĕçсем юлашки юлнă çăнăхне илсе тухма тăчĕç те, вăл нимĕçсене хирĕç тăчĕ. Вара урнă фашистсем унăн ачине пăшал кӳпчекĕпе çапса вĕлерчĕç. Хĕрарăм, чунтан макăрса ярса, ачине пырса тытрĕ, анчах пĕр нимĕç салтакĕ ăна персе пăрахрĕ. Япалисене çаратса тухрĕç те çуртне вут тĕртсе ячĕç,—терĕç.

Эпир пĕр тикĕс мар вырăна çитрĕмĕр. Ку вырăн çырма-çатраллă, унта ушахсемпе кӳлĕсем, çӳллĕ вырăнсем, вăрман пеккисем пур. Çак вырăна нимĕçсем тăршшĕпех тĕреклетнĕ вырăн туса хунă. Çавна май вара кунти ялсене тĕппипех аркатнă. Касса пĕтернĕ йывăç вуллисемпе тункатисем тăрăх çеç кунта ялсем пулнине пĕлме пулать. Çыннисене фашистсем пĕтĕмпех ирĕксĕрлесе Германие ăсатнă.

Нимĕçсен тискер ĕçĕсем çинчен калама та хăрушă тата каласа та пĕтерес çук. Вĕсене курса пирĕн хаяр çилĕсем капланса килеççĕ. Çук, эпир вĕсене ахаль хăвармăпăр, эпир ирсĕр тăшмансене пуриншĕн те тавăрăпăр.

Пирĕн боецсен чĕринче курайманлăх çунса тăрать. Хаяр курайманлăх! Вăл курайманлăх—ахаль сăмах мар, вăл вăй—çав тери пысăк вăй, нимпе те çĕнтерме çук вăй!

Пирĕн тылри юлташсем! Кашниех харпăрхăй вырăнĕнче фронтри пек хастарлăн ĕçлĕр. Эсир тылра стахановла ĕçлени тăшмана вилмелле пырса çапниех пулать. Пурте тăшмана çĕнтерме çĕкленĕр! Нимĕç оккупанчĕсене вилĕм!

Ананий Степанов.

Полевая почта 30737-Е.

ФРОНТРИ ХАÇАТСЕНЧЕН

ПУРТЕ УН ХĂРАХХИ

Нимĕç офицерĕ (фронта киличчен вăрă-хурах пулнă салтака). Ну, мĕнле пек туйăнать сана пирĕн батальонра?

Салтак. Калама та çук чаплă, обер-лейтенант господинăм! Йĕри-таврах хамăр çынсем, ман пеккисем! Тĕрмере ларнă чухнехи пекех туйăнать!..

(«Во славу родины»)

ТĔРĔС ОТВЕТ

— Фриц, мĕншĕн сирĕн дивизи «Мертвая голова» («Вилĕ пуç») ятлă?

— Мĕншĕн тесен пирĕн дивизире пĕр чĕрĕ пуç та юлмарĕ.

(«За советскую родину»).

ИТАЛИРЕ

— Господин профессор, эсир Германипе Совет Союзĕ хушшинчи вăрçă пирки мĕн шутлатăр?

— Атьăр шăл тухтăрĕ патне.

— Шăл тухтăрĕ патне? Мĕншĕн шăл тухтăрĕ патне?

— Мĕншĕн тесен чăн-чăн итальянец шăл тухтăрĕ патĕнче çеç çăварне уçма пултарать. Урăх çĕрте уçсан... Хăварах пĕлетĕр мĕн пуласине.

Ют çĕршывсенче

ВАТАÇĔР ТИНĔС БАССЕЙНĔНЧИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, майăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Туниспа Бизертăна тăшмантан тасатнă хыççăн союзниксен тинĕсçар флочĕн вăйĕсем Бон çурутравне хупăрласа илнĕ. Вăл çурутрав çинче тăшман войскисен юлашкийĕсем вырнаçнă. Çав операцисемпе чарăнса тăмасăр, карапсем тăшман çине çурутравăн хĕвелтухăçĕпе хĕвеланăç енĕсенчен персе тăраççĕ. Тунисăн çурçĕр-хĕвелтухăç пайĕнче ĕнер 11 сехетре тăшман хирĕç тăрасси пĕтĕмпех пĕтсе ларнă. Хупăрласа илнĕ чаçсене американецсен 2-мĕш корпусĕ пĕр сăмахсăрах парăнтарнă. Пĕр çав секторта кăна, тулли мар даннăйсем тăрăх, 25.000 çынна яхăн тыткăна илнĕ, вăл шутра 6 генерал. Тĕрлĕ çар хатĕрĕсем нумай тытса илнĕ.

Тунисăн кăнтăр-хĕвелтухăç пайĕнче халĕ те йывăр çапăçусем пыраççĕ, мĕншĕн тесен тăшман хаяррăн хирĕç тăрать.

Союзниксен авиацийĕ тăшман войскисемпе транспорчĕсене Бон çурутравĕ çинче массăллăн пыра-пыра çапнă. Тăшман пысăк çухатусем тӳсет. Бомбăсем çавăн пекех çыран хĕрринчи тăшман карапĕсем çине тата Бизертăран хĕвелтухăçнерехре пăрахнă. Тăшманăн темиçе карапне путарнă, ыттисене сиенленĕ.

Бомбардировщиксен пысăк соединенийĕ Пантеллери утравĕ çинчи аэродрома тапăннă. Темиçе çĕрте пушар тухнине паллă тунă. Майăн 9-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Сардини утравĕ çинчи тăшман аэродромĕсене атакăланă.

Майăн 7-мĕшĕнчен пуçласа Тунисра 50.000 çынран кая мар тыткăна илнĕ. Ĕнер Тунис тĕлне тăшманăн пĕр самолечĕ те вĕçсе пыман. Германи авиацине çапăçуран кăларнă пулмалла.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 9-мĕшĕпе майăн 8-мĕшĕ хушшинче союзниксем 64.000 нимĕçпе итальянеца тыткăна илнĕ. Çав вăхăт хушшинчех тăшманăн вилнисемпе аманнисене шутласассăн 42.000 çын пĕтнĕ. 330 танкне пĕтернĕ, 4.500 машинăна тытса илнĕ е пĕтерсе тăкнă. Ĕнер ирхине кăна, эвакуацилеме ăнăççăр хăтланнă хыççăн, Бизерта районĕнче 5.000 нимĕç салтакĕпе офицерĕ тыткăна парăннă.

Алжирти радио пĕлтернĕ тăрăх, тăшман хирĕç тăрса çапăçасси пĕтĕмпех путланса ларнă. Тăшман салтакĕсем пинĕ-пинĕпе тыткăна парăнаççĕ. Тăшман войскисем çул çинче çар хатĕрĕсем нумай пăрахса хăвараççĕ. Союзниксен авиацийĕ тăшман чакакан çулсем çине пĕрмаях бомбăсем пăрахать тата пулеметсенчен перет.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, тăшманăн Тунис çывăхĕнчи икĕ пысăк аэродромĕ çинче тата Бизерта çывăхĕнче тăшманăн тĕрлĕ системăллă 200 самолечĕ ишĕлсе выртаççĕ.

ЛОНДОН, майăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер кăнтăрла Америка бомбардировщикĕсем Сицилири Мессина гаваньне ăнăçлăн пырса тапăннă. Икĕ парохода, чугунçул деповĕ çине, запаслă çул çине тата ытти çар объекчĕсем çине те бомбăсем тӳрремĕнех ӳкнине паллă тунă.

Тĕрĕсленсе килнĕ материалсем

Вулав çурчĕн заведующине вырăнтан кăларнă

«Чăваш Коммуни» редакцине Тăвай районĕнчи Вăтаял колхоз клубĕ начар ĕçлени çинчен çырса пĕлтернĕччĕ. Материалра кăтартнă тăрăх, вулав çурчĕн заведующийĕ Иванов Егор нимле ĕç те туман. Ĕçлес вырăнне вăл ĕçсе çӳренĕ, вулав çуртĕнчех картла вылянă. Вулав çурчĕ çырăнса илекен хаçатсене колхозниксене вуласа кăтартмалла чух, вăл çав хаçатсене киле табак туртма илсе кайнă. Кăтартнă фактсене тĕрĕслеме тата çитменлĕхсене пĕтерме редакци çав çырăва Тăвай районĕн çутĕç пайне янăччĕ. Районри çутĕç пайĕ Егор Иванова ĕçрен кăларса ун вырăнне вулав çурчĕн заведующийĕ пулма примерлă та ĕçре активлăх кăтартакан комсомолеца уйăрса лартни çинчен пĕлтерчĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Росглаввинпон Шупашкарти эрех комбиначĕ лартмашкăн улмуççи, хурлăхан тата хăмлаçырли йывăççисем кирек мĕн чухлĕ сутать.
5—2.

Шупашкарти эрех комбинатне ялхуçалăхĕнче ялан ĕçлеме рабочисем кирлĕ. Пĕчченнисене общежити параççĕ, столовăй пур, кашнине хăйшĕн пахча-çимĕç лартса ума çĕр участокĕ параççĕ.

Çуллахи вăхăтра вутă хатĕрлесси çинчен

1942—1943 çулхи хĕлле вырăнти учрежденисем валли вутă хатĕрлесе ăна турттарас тĕлĕшпе вырăнти топливо промышленность управленийĕ тата чылай районсемпе предприятисем япăх ĕçленĕ. Хăшпĕр исполкомсем тата ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсем, предприяти руководителĕсем вутă хатĕрлесе ăна турттарас план хăй тĕллĕн пулса пырасси çине шанса ларни те пулнă. Çавна пула вутă хатĕрлемелли кĕркуннехипе хĕллехи план хатĕрлес енĕпе 86,5 процент, турттарас енĕпе 64,6 процент кăна пурнăçа кĕнĕ.

Ку тĕлĕшпе уйрăмăнах Куславкка, Кувакино, Комсомольски, Октябрьски, Çĕмĕрле районĕсем, Наркомместпром предприятийĕсем, Наркомхоз предприятийĕсем, Канашри вагонсем юсакан завод, Улатăрти паровозсем юсакан завод т. ыт. те япăх ĕçленĕ.

Çак кунсенче Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çуллахи вăхăтра 1943—44 çул валли вутă хатĕрлесси çинчен сӳтсеявса решени йышăнчĕç.

Хуласене, район центрĕсене, промышленность предприятийĕсене, шкулсемпе больницăсене, госпитальсене, мунчасене, пурăнмалли çуртсене хĕлле хутма типĕ вутă хатĕрлес ĕçе халех тытăнмалла.

1943 çулхи çуллахи уйăхсенче (май-сентябрь) хĕлле хутма промышленность валли, шкулсем, больницăсемпе госпитальсем валли 724,2 пин кубометр вутă хатĕрлемелле. Вăл плана пурнăçлама çирĕп график туса хатĕрлесе, пĕтĕм планăн 15 процентĕнчен кая мар май уйăхĕнче, 30 процентран кая мар июньре, 30 процентран кая мар июльте, юлашки 10 процентне сентябрь уйăхĕнче пурнăçламалла. Вутă хатĕрлекен организацисен пĕтĕм ĕçе халех анлăн туса пымалла.

Вутă хатĕрлекенсем пурте (Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи топливо промышленность управленийĕсĕр, «Чувашлесзаг» тресчĕсĕр тата лесоохранăпа лесонасаждени Чăваш управленийĕсĕр пуçне) вăрман касса вутă хатĕрлес ĕçе хăйсен предприятисенчи рабочисемпе служащисен вăйĕпе туса ирттермелле, çапла хатĕрленĕ вутă пĕтĕмпех предприятипе учреждени валли каймалла.

Вутă хатĕрлес плана вăхăтра пурнăça кĕртес шутпа, рабочисемпе служащисене тата учрежденисемпе предприятисенче ĕçлемен хула халăхне 3 уйăхлăха çити мобилизацилеме райгорсовет исполкомĕсене ирĕк панă.

Наркоматсемпе ведомствăсене виçĕ уйăхлăха çити рабочисемпе служащисене вутă хатĕрлемешкĕн мобилизацилеме ирĕк панă.

Вутă хатĕрлеме вăрмана кайнă рабочисемпе служащисене хăйсем ĕçленĕ учрежденисен ĕç укçи çапла тӳлемелле: вĕсен çемьинче ĕçлеме пултарайманнисем пулсан—80 процент, ĕçлеме пултарайманнисем çук пулсан—40 процент тӳлемелле. Çакăнпа пĕрлех предприятисемпе учрежденисенче ĕçлекенсен воскресникĕсене туса ирттермелле.

Рабочисемпе служащисен тата вăрман ĕçлеме тухакан ытти çынсен сезонра 100 кубометр вутă хатĕрлемелле. Вăрманта ĕçлекен хăйĕн нормине срокчен тултарать пулсан, вăл урăх ĕçлемесен те пултарать.

Вутă хатĕрлекен организацисем вутă хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлекен рабочисене бригадăсем, звеносем тăрăх уйăрмалла; кашни бригадăна уйăхлăх производствăллă задани памалла; вăрманта ĕçленĕ чухне хăрушсăрлăх техникине çирĕп пăхăнса тăмалла; вăрман ĕçлеме каякансене пурне те тивĕçлĕ инструмент памалла (пăчкă, пуртă, напильник), вĕсене яланах хăйраса тămалла.

Вăрман хатĕрлеме яракан рабочисене апатлантарас ĕçе потребкооперации çине, вырăнти торгсем çине, ОРС-сем çине хунă.

Вăрман хатĕрлекенсем хушшинче массăллă-политикăллă ĕçе тивĕçлипе туса пымалла. Вăрманта ĕçлекен кашни бригадăрах калаçусем ирттерме, хаçатсем вулама, хаçат материалĕсене ăнлантарса пама агитаторсем уйăрмалла. Уйăрнă агитаторсемпе яланах семинарсем ирттермелле. Çынсем нумай вырăнсенче ВКП(б) горкомĕсемпе райкомĕсен лекторĕсене лекцисем вулаттармалла. Вăрманта ĕçлекен çынсене партипе правительствăн паллă решенийĕсем çинчен каласа памалла, Совинформбюро пĕлтерĕвĕсемпе паллаштармалла, Хĕрлĕ Çар паттăррăн кĕрешнин примерĕсем çинчен каласа парса тата социализмлă ăмăртăва анлăн сарса, ĕçлекенсене плана срокчен тултарма хавхалантармалла.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 1051 Типография № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. б. 58. 42 п.